27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
10
ВЫРСАРНИКУН
179(6674) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне ТОЛБУХИНА
Адмирала ОКТЯБРЬСКИЕ

УКРАИНАРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем сентябрӗн 8-мӗшӗнче Румынипе Болгари хушшинчи чикӗ урлӑ каҫнӑ та, икӗ кун хушшинче 170 километр таран малалла кайнӑ, ҫулӗсен ШУМЕН (ШУМЛА) ятлӑ питех те паха узелне, ДУНАЙ ҫинчи РУСЕ (РУЩУК) ятлӑ пысӑк порта йышӑннӑ тата, ХУРА ТИНЕС флочӗпе пӗрле ҫыхӑнса кӗрешсе, Хура тинӗс ҫинчи пысӑк портсене ВАРНА тата БУРГАС хулисене туртса илнӗ.

Пирӗн ҫарсем Болгарире операцисем пуҫласа янӑ, мӗншӗн тесен Болгари правительстви Германипе ҫыхӑнса тӑрассине татасшӑн пулман тата Болгари территорийӗнче нимӗҫсем хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене тытнӑ.

Пирӗн ҫарсем ӑнӑҫлӑн кӗрешнине пула, вӑрҫӑ ӗҫсен тӗллевне пурнӑҫа кӗртнӗ: Болгари Германипе ҫыхӑнса тӑрассине татнӑ те ӑна хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫласси ҫинчен пӗлтерчӗ. Ҫапла вара Болгари нимӗҫ империализмӗн Балканри тӗрекӗ пулма пӑрахрӗ, вӑл юлашки вӑтӑр ҫул хушшинче нимӗҫ империализмӗн ҫавӑн пек тӗрекӗ пулса тӑнӑ.

Болгари территорийӗнче туса ирттернӗ операцисенче ШЛЕМИН генерал-лейтенантӑн, ГАГЕН генерал-лейтенантӑн, ШАРОХИН генерал-лейтенантӑн ҫарӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ЖДАНОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн КАТКОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенантӗн СУХОРУЧКИНАН танкисчӗсем; 1-мӗш рангри капитанӑн ДЕРЕВЯННАН, II-мӗш рангри капитанӑн РАТНЕРАН, КАТАНОВ майоран морякӗсем; авиаци генерал-лейтенантӗн ЕРМАЧЕНКОВАН летчикӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫитӗнӗве ялавлӑха палӑртса хӑварас тесе, Болгари территорийӗнчи операцисенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисене «РУЩУКСКИ», «ШУМЛИНСКИ», «ВАРНЕНСКИ» тата «БУРГАССКИ» тесе ят пама тӑратас.

Паян, сентябрӗн 9-мӗшӗнче, 23 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, иҫсӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, УКРАИНАРИ 3-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене тата Хура тинӗс флочӗн морякӗсене, Болгари территорийӗнчи операцисенче уйрӑмах чапа тухнӑскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, карапсемпе ҫӑссӗне, Болгарири операцисенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ кӗрешнӗшӗн ТАВ ТАВАТӐП.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи сентябрӗн 9-мӗшӗ.

Совет Союзӗнчи предприятисенче ӗҫлекен мӗнпур рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене

Мускаври Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ автозаводӑн коллективӗ

ЧӖНСЕ КАЛАНИ

Хаклӑ юлташсем!

Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци пулнӑранпа XXVII ҫул тултарас кун ҫывӑхарса килет. Пирӗн Тӑван ҫӗршыври халӑхсем ҫав чаплӑ куна Отечественнӑй вӑрҫӑ фрончӗсенче тата тылра ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тунипе кӗтсе илеҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерӳллӗ наступлени туса пыни Германи ҫарне ҫав тери пысӑк поражени тӳстерчӗ. Аманнӑ фашистла тискер кайӑка хӑйӗн шӑтӑкӗнче пуҫӗпех ҫапса вӗлерес тесе, Хӗрлӗ Ҫар ӑна Совет ҫӗрӗ ҫинчен тимӗр шӑпӑрпа шӑлса хӑвалать. Хаяр тавӑру хӗҫӗ гитлерла Германипе унӑн тарҫисен пуҫӗсем ҫине ҫӗкленчӗ.

Сталин юлташ Хӗрлӗ Ҫарпа совет халӑхӗ умне лартнӑ историллӗ задачӑсем тылри кашни ӗҫҫыннинче мӗнпур вӑй-хӑвата хурса ӗҫлеме хушаҫҫӗ: Хӗрлӗ Ҫар танксемпе самолетсем, автомобильсем, боеприпассемпе хӗҫпӑшалсем тата ытти тӗрлӗ вӑрҫӑ техники ытларах та ытларах ыйтнине пирӗн пӗтӗмӗшпех тивӗҫтермелле.

Сталин юлташ йӗркелесе ҫитӗнтернӗ пирӗн социализмлӑ индустри ҫав тери чаплӑ ҫитӗнӳсем турӗ. Совет промышленноҫӗ вӑрҫӑн йывӑр тӗрӗслевне тӳссе ирттерчӗ, вӑл фронт валли продукци туса кӑларассине пӗр пӑркаланмасӑр, тӑтӑшах ӳстерсе пырать.

Пирӗн завод коллективӗ те, Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса тата юхнӑлӑ тӑшмана ҫапса аркатас ӗҫре паттӑр Хӗрлӗ Ҫара мӗнпур вӑйпа пулӑшма тӑрӑшса, хӑйӗн ӗҫӗнче чылай пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ.

1944 ҫулӑн ҫурҫулхи программине эпир 10,5 процент чухлӗ ирттерсе тултарнӑ. Пирӗн продукци 100 процентпех комплектлӑ пулса тухать. Ҫав вӑхӑт хушшинчех эпир, производство техникипе унӑн йӗркелӗхне тӑтӑшах лайӑхлатса пырса — поточнӑй метода ӗҫе кӗртсе пырса, станоксемпе ытти ӗҫ хатӗрӗсене ҫӗнӗлле йӗркелесе, тимӗре каскаламалли режима ҫӗнӗрен пӑхса тухса, япаласем туса кӑларассине автоматла майсемпе йӗркелесе, ҫирӗп сплавсемпе анлӑн усӑ курса, пырса, инструментсене ҫӗнӗрен лайӑхлатса тата ытти тӗрлӗ мероприятисене пурнӑҫа кӗртсе, ӗҫ тухӑҫлӑхне планпа пӑхнинчен 10,7 процент ытларах ӳстертӗмӗр, продукцин хӑйне ларакан хакне 3,7 процент чухлӗ йӳнетрӗмӗр.

Пирӗн завод коллективӗ Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне вуникӗ уйӑх хушши ӗнтӗ тӑтӑшах хӑй аллинче тытса тӑрать. Анчах эпир ҫакна асра тытатпӑр: халӗ, вӑрҫӑ чи хаяр та татӑклӑ тапхӑра, чи йывӑр тапхӑра кӗнӗ чухне, татах та лайӑхрах, татах та ытларах вӑй хурса ӗҫлемелле.

Пирӗн предприятисенчи производство резервӗсемпе туллинрех усӑ курас тесен, производство техникипе организацине, продукци пахалӑхне пӗр пӑркаланмасӑр малалла лайӑхлатса пымалла, продукцин хӑйне ларакан хакне ытларах йӳнетмелле, хозрасчета пурнӑҫа кӗртсе пымалла, производствӑри тӑкаксемпе татӑклӑн кӗрешмелле.

Социализмлӑ ӑмӑртӑва татах та анлӑнрах сарас пулать, стахановецсен йышне нумай хут ӳстерес пулать.

Пирӗн тӑван Хӗрлӗ Ҫарӑн геройла ҫитӗнӗвӗсемпе тата Сталин юлташ совет тылӗнчи работниксене пысӑка хурса хакланипе хавхаланса, Мускаври Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ завод коллективӗ Совет Союзӗнчи предприятисенче ӗҫлекен мӗнпур рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци XXVII ҫул тултарнӑ ятпа социализмлӑ ӑмӑрту пуҫарса яма чӗнет.

Автозавод коллективӗ хӑй ҫине ҫакӑн пек обязательствӑсем илет:

1. 1944 ҫулхи вунӑ уйӑхри производство программине срокчен пурнӑҫламалла тата планран ирттерсе 58 миллион тенкӗлӗх продукци туса кӑлармалла.

2. Вунӑ уйӑхри программӑна автомобильсем енӗпе 3 процент чухлӗ ирттерсе тултармалла.

3. 1944 ҫулхи виҫҫӗмӗш квартӑлта ӗҫ тухӑҫлӑхне 10 процент чухлӗ ӳстермелле.

4. Продукцин хӑйне ларакан хакне планпа пӑхнинчен йӳнетсе 10 уйӑх хушшинче 19 миллион тенкӗлӗх перекетлемелле.

5. Заводӑн 10 цехне хозрасчет ҫине куҫармалла.

6. Виҫҫӗмӗш квартӑлта тата октябрь уйӑхӗнче электроэнергине планпа пӑхнинчен 4 процент чухлӗ, мазута 2,5 процент чухлӗ перекетлемелле, ҫав вӑхӑт хушшинчех Мускав патӗнчен илсе тӑракан кӑмрӑка 3.000 тонна перекетлесе хӑвармалла.

7. 2.500 ҫынна техникӑна вӗренме яваҫтармалла.

8. Подсобнӑй хуҫалӑхри тата харпӑрхӑй пахчисенчи тырпулсемпе пахча-ҫимӗҫсене вӑхӑтра, пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртмелле.

9. Заводӑн пурӑнмалли ҫурчӗсемпе цехӗсене хӗле кӑтартуллӑн хатӗрлесе ҫитермелле, заводпа рабочисен поселокӗсем валли вӑхӑтра вутӑ хатӗрлесе хумалла.

10. Заводра культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе анлӑн сармалла.

Хаклӑ юлташсем!

Эпир сире Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртура пирӗн социализмлӑ промышленноҫӑн ҫӗнӗ ҫитӗнӗвӗсемшӗн кӗрешме, кашни завода, фабрикӑна, кашни предприятие кӑтартуллӑ ӗҫлекен тӑвассишӗн кӗрешме чӗнетпӗр. Кашни ӗҫҫынни, вӑл ӗҫ фрончӗн кирек мӗнле участокӗнче ӗҫлесен те — вӑл мартен е домна патӗнче, электрокӑмака е вагранка патӗнче, ҫапӑҫура кирлӗ машинӑсем пухакан конвейер умӗнче, станокпа агрегат умӗнче ӗҫлет-и,— пур ҫӗрте те вӑл фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хӑвӑртрах ҫапса аркатма кирлӗ продукцие ҫӗршывпа фронт валли планран ирттерсе туса кӑларассишӗн хӑй мӗн тума пултарнине пӗтӗмпех тутӑр.

Сывӑ пултӑр пирӗн ҫӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Ҫар!

Сывӑ пултӑр пирӗн юратнӑ Тӑван ҫӗршыв!

Сывӑ пултӑр пирӗн аслӑ ҫулпуҫ, пирӗн полководец, пирӗн тӑван Сталин юлташ!

Ҫак чӗнӗве рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пӗрлехи пухӑвӗсенче йышӑннӑ.

Завод коллективӗ хушнипе алӑ пуснӑ:

Завод директорӗ И. ЛИХАЧЕВ.
ВКП(б) Центральный Комитечӗн заводри парторгӗ В. ЛЕВЫКИН.
Завком председателӗ Н. БАРАНОВ.
ВЛКСМ Центральный Комитечӗн комсоргӗ Т. МОРОЗОВА.
Цехсен начальникӗсем: П. ЛИСНЯК, В. ДОЕНИН.
Стахановецсем: Г. КОМОЛОВ, В. ЗЕМСКОВ, Ф. ГОРОХОВ, Е. ИЗРЯДНОВА.

Совет ҫарӗсем Болгарире вӑрҫӑ ӗҫӗсене чарса лартнӑ

Болгари правительстви Германипе ҫыхӑну тытма пӑрахнӑ, Германие хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫланӑ тата Совет правительствине перемирири тӑвасси ҫинчен ыйту панӑ пирки совет ҫарӗсем сентябрӗн 9-мӗшӗнче 10 сехетре каҫхине Болгарире вӑрҫӑ ӗҫӗсене чарса лартнӑ.

Совет правительстви, Великобритани тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительствисемпе пӗрле, халӗ Болгарипе перемири тумалли условисене туса хатӗрлет.

СССР НАРКОМИНДЕЛЕН ИНФОРМАЦИ БЮРОВӖ.

Ӗҫсынни депутачӗсен Елчӗк районсовет исполкомӗпе ВКП(б) райкомӗ тӑратнӑ тӑрӑх, тырпулсене пухса кӗртес енӗпе тухӑҫлӑн тата лайӑх ӗҫлеменшӗн, государствӑна тырӑ парса татнашӑн, ял хуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫак колхозсене кӗртнӗ:

1. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ В. В. Зайцев юлташ). Ку колхоз 751 гектар ҫинчи тырпула августӑн 28-мӗшӗ тӗлне пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртнӗ. Кӗрхи тырӑсене августӑн 23-мӗшӗ тӗлне, агротехника мероприятисене лайӑх пурнӑҫа кӗртсе, акса хӑварнӑ. Государствӑна тырӑ памалли кӑҫалхи плана тултарса, колхоз 1945 ҫулхи обязательствасемшӗн аванс шучӗпе 60 центнер тырӑ панӑ.

2. «Марс» колхоз (председателӗ А. Г. Гаязов юлташ). Ку колхоз тырпулсене сентябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне вырса пухнӑ. Кӗрхи тырӑсене, 320 гектар, агротехникӑн чи лайӑх срокӗсенче акса хӑварнӑ. Государствӑна 1944 ҫулшӑн тырӑ пӗтӗмӗшпех парса татнӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

СЕНТЯБРӖН 8-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Сентябрӗн 8-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ЛОМЖА хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре ҫаплах хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатасшӑн ҫапӑҫнӑ, тӑшмана темиҫе ялтан хӑваласа кӑларнӑ.

Румынире пирӗн ҫарсем малалла куҫса пынӑ, Румыни ҫарӗсемпе пӗрле СИБИУ хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—ПЕРИШАНИ, БОГДАНЕШТЬ, СЛАВИЦЕШТИ, КОШОВЕНИ-ДЕ-ЖОС, ЛЕУ, ДИОШТИ ятлӑ пысӑк ялсем. Халӗ паллӑ пулнӑ тӑрӑх, УКРАИНАРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем тыткӑна илнӗ ҫынсем хушшинче ПЛОЕШТИ нефть районӗн коменданчӗ пулнӑ нимӗҫ генерал-майорӗ БРАНТ АРТУР тата нимӗҫсен ПЛОЕШТИ районне сыхлӑшран тапӑнасран хӳтӗлекен бригадин командирӗ генерал-майор ТЕШНЕР пур.

Сентябрӗн 8-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ДЖУРДЖУ хулипе МАНГАЛИЯ хули участокӗнче Румынипе Болгари чикки урлӑ каҫнӑ, 30 километртан пуҫласа 65 километра ҫити малалла кайнӑ, РУСЕ (РУЩУК), ТУРТУКАЙ, СИЛИСТРА, ДОБРИЧ хулисене, Хура тинӗс ҫинчи ВАРНА хулипе портне тата САРСЫНЛАР, КАРАБЕЛИКИОЙ, АЛФАТАР, ТОПАЛ, КОЧУМАР, ЧАМУРЛИЯ, БАЛАДЖА ятлӑ пысӑк ялсене туртса илнӗ. Болгари ҫарӗсем пирӗн ҫарсене хирӗҫ тӑма хӑяйман.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Сентябрӗн 7-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 13 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 9 самолетне персе ӳкернӗ

☆ ☆ ☆

Ломжа хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшмана атакӑланӑ та хаяр тытӑҫу хыҫҫӑн нимӗҫсене темиҫе тӗреклӗ пунктран хӗссе кӑларнӑ. Хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 2 тупӑ, 24 пулемет тата ҫар хатӗрӗсем тиенӗ 10 лав тытса илнӗ. Гитлеровецсем умлӑн-хыҫлӑн 5 контратака тунӑ, анчах та вӗсене пысӑк ҫухатусем курсе, каялла ыватса янӑ. Тепӗр участокра совет боецӗсем нимӗҫсен ротине ҫавӑрса илнӗ те пӗтерсе тӑкнӑ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Румынире пирӗн ҫӑмӑллӑн куҫса ҫӳрекен соединенисемпе пехота, ӗнер Рымникул Вылча хулине туртса илнӗ хыҫҫӑн, шоссе ҫулӗ тӑрӑх хӑвӑрттӑн ҫурҫӗрелле кайма тытӑннӑ. Трансильванири Альпы тӑвӗсем ҫинчи лайӑх позицисемпе усӑ курса, тӑшман пирӗн чаҫсене чарса лартма хӑтланнӑ. Совет танкисчӗсемпе мотопехоти, хӑйсен ҫулӗ ҫинчи нимӗҫ отрячӗсене пӗтере-пӗтере тӑкса, Румыни ҫарӗсемпе пӗрле шоссе ҫулӗсемпе чугун ҫулсен паха узелӗ пулса тӑракан Сибиу хулине туртса илнӗ. Васкаса резервсем илсе пынӑ хыҫҫӑн тӑшман хӑйӗн пехотин пысӑк вӑйӗсене ҫапӑҫӑва кӗртсе янӑ, вӗсене танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем пулӑшса пынӑ. Нимӗҫсемпе венгерсен чаҫӗсем малтанах румынсен ҫарӗсем тӑракан вырӑна кӑштах савӑлланса кӗнӗ. Пырса ҫитнӗ совет ҫарӗсем румынсемпе пӗрле тӑшман контратакисене пурне те сирсе янӑ, вара гитлеровецсен ирӗксӗрех васкасах каялла чакма лекнӗ. Трофейсем нумай тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Иелгава (Митава) хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре нимӗҫсем, хӑйсен ӗнер ҫухатнӑ позицийӗсене каялла туртса илме хӑтланса, темиҫе хутчен те контратака тунӑ. Пирӗн подразделенисем тӑшмана каялла хӑваласа янӑ, хӑйсем йышӑннӑ позицисене ҫирӗп тытса тӑраҫҫӗ. Пирӗн позицисем патне пымалли вырӑнсенче тӑшманӑн 140 вилли выртса юлнӑ. Совет боецӗсем тӑшманӑн 8 пулеметне тата 2 минометне тытса илнӗ.

* * *

1944 ҫулхи июнӗн 23-мӗшӗнче наступлени пуҫланнӑранпа пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 41 генералне тыткӑна илнӗ, вӑл шутра: корпус командирӗсем — 8, дивизи командирӗсем — 24, пысӑк хула (Могилев, Бобруйск, Люблин, Яссы, Кишинев, Плоешти) коменданчӗсем — 6, нимӗҫсен 6-мӗш армийӗн командующийӗн заместителӗ, нимӗҫсен 9-мӗш армийӗн инженери службин начальникӗ тата Плоешти нефть районне сывлӑшран тапӑнасран хӳтӗлекен бригадӑн командирӗ,

* * *

Пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 28-мӗш армейски корпусӗ ҫумӗнчи нацистсен руководствин отделӗн директивӑллӑ вӑрттӑн ҫырӑвне тытса илнӗ. Вӑл ҫыру ҫине 40—44-мӗш номер лартнӑ, ӑна 1944 ҫулхи августӑн 4-мӗшӗнче ҫырнӑ. Ятне ҫапла панӑ: «1944-мӗш ҫулхи июлӗн 20-мӗшӗнче пулса иртнӗ ӗҫсене ӑнлантарса парасси ҫинчен» тенӗ (1944-мӗш ҫулхи июлӗн 20-мӗшӗнче нимӗҫ генералӗсемпе офицерӗсем Гитлера вӗлерме тапӑннӑ). Ҫав вӑрттӑн ҫырура ҫапла каланӑ: «Фюрер ҫакна ӑнлантарса пачӗ: йывӑр вӑхӑтсенче уйрӑм районсенче ӗҫ туса тӑракан власть арми аллинче е уйрӑм генералсен аллинче пулмалла мар. Лару-тӑру уйрӑмах ҫивӗчленсе кайнӑ вӑхӑтра, пирӗншӗн хӑрушӑ пулса тӑнӑ вӑхӑтсенче, власть гаулейтерсен аллинче пулмалла (гаулейтерсем вӗсем — нацистсен парти организацийӗсен вырӑнти руководителӗсем), вӗсен аллинчи власть тахҫанхинчен те ҫирӗпрех пулмалла». Ҫак ҫырӑвӑн вӗҫӗнче ҫапла ҫырса хунӑ: «Вуланӑ хыҫҫӑн ку ҫырӑва пӗтерсе тӑкмалла», тенӗ.

Ҫапла ӗнтӗ, ҫакӑ уҫҫӑнах курӑнса тӑрать: гитлеровецсем ку таранччен хаҫатсенче тата радио тӑрӑх июлӗн 20-мӗшӗнче пулса иртнӗ ӗҫсем ҫинчен пӗлтерни тӗтӗм чаршавӗ вырӑнне кӑна пулнӑ. «Заговорщиксен пӗчӗк ушкӑнӗ» ҫинчен сӳпӗлтетсе, Гитлерпа унӑн тарҫисем фашистсен организмне кӑшласа ҫиекен тутӑха пытарса хӑварасшӑн тӑрӑшнӑ. Вӗсем Германие ярса илнӗ шалти кризисӑн чӑн-чӑн анлӑшне пытарса хӑварма тӑрӑшнӑ, салтаксемпе офицерсене нимӗҫсен армийӗ ӗлӗкхи пекех пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ тесе ӗнентерме тӑрӑшнӑ.

Пирӗн ҫарсем тытса илнӗ вӑрттӑн ҫырӑва фашистсен чиновникӗсен пӗчӗк ушкӑнӗ валли ҫырнӑ, ҫавӑнпа та вӑл Германири ӗҫсен чӑн-чӑн лару-тӑрӑвне кӑштах ҫутатса парать. Ҫак ҫыру ҫакӑн ҫинчен каласа парать: гитлеровецсем халӗ хӑйсен армийӗпе генералӗсене шанмаҫҫӗ. Ыйту «сутӑнчӑксен пӗчӗк ушкӑнӗ» ҫинчен пырать пулсан, ҫавӑн пек вӑрттӑн ҫырусем те ҫырас ҫук. Гитлер ахальтен мар хӑйӗн гаулейтерӗсене власа арми е унӑн генералӗсем аллинче хӑварни хӑрушӑ пулма пултарнине ӑнлантарса парать. Фашистсен шайккин пуҫлӑхӗсем генералсемпе офицерсем шанчӑксӑр та хӑрушӑ ҫынсем пулма пултарнинчен шикленсе тӑраҫҫӗ. Фашистсен шайккин пуҫлӑхӗсем ҫав ҫынсенчен сыхланма хушаҫҫӗ, кирлӗ вӑхӑтра вӗсене хӑвӑртрах вӗлерсе тӑкма хушаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ Гитлер хӑйӗн гаулейтерӗсене «йывӑр минутӑсенче» власран генералсене сирсе ярса, пӗтӗм власа хӑйсен аллине илме хушать.

УЧАСТОКСЕНЧИ ВРАЧСЕН РЕСПУБЛИКӐРИ СЪЕЗЧӖ

Ӗнер, сентябрӗн 9-мӗшӗнче, Шупашкарта, Советсен Ҫурчӗн ларусен залӗнче участоксенчи врачсен республикӑри съезчӗ уҫӑлчӗ.

Съезда Чӑваш АССР Совнаркомӗн председателӗ Матвеев юлташ уҫрӗ.

Съезд президиума ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗсене Чарыковпа Андреев юлташсене, Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн председательне Андреева юлташа, Чӑваш АССР Совнаркомӗн председательне Матвеев юлташа, ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫумӗнчи парти контроль комиссин Чӑваш республикинчи уполномоченнӑйне Логвин юлташа, Совет Союзӗн Геройне Салихов юлташа, Чӑвашсен трахома институчӗн профессорне орденоносеца Чемолосов юлташа, Тутар республикин представительне Мурзин профессора, Мари АССР-ӗн сывлӑха сыхлав Халӑх Комиссарне Журавлев юлташа, РСФСР-ӑн сывлӑха сыхлав Халӑх Комиссарӗн заместительне Мананникова юлташа т. ыт. те суйларӗ.

Съезд хисеплӗ президиума, ҫав тери хавхаланса, Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ ертсе пыракан ЦК ВКП(б) Политбюроне суйларӗ.

Унтан съезд кун йӗркине ҫирӗплетрӗ.

Съездӑн кун йӗркинчи пӗрремӗш ыйтупа Чӑваш АССР-ӗн Сывлӑха сыхлав Халӑх комиссарӗ А. Лихачев юлташ доклад турӗ.

Съезд, ҫав тери хавасланса, Сталин юлташ патне саламлӑ ҫыру ячӗ.

Ӳкерчӗк ҫинче: Муркаш районӗнчи Ярапайкассинчи ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулта ӗҫлекен Чӑваш АССР-ӗн тава тивӗҫлӗ учительници К. И. Тетерина юлташ. Вӑл ҫак шкулта 40 ҫул ӗҫлет. Ҫамрӑк ӑрӑва коммунистла воспитани парас тата ачасене вӗрентес ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳ тунӑшӑн тата нумай ҫул хушши халӑха ҫутта кӑларас тӗлӗшпе ӗҫленӗшӗн К. И. Тетерина юлташа Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ парса наградӑланӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Чӑваш АССР Совнаркомӗ районсемпе хуласенчи промкомбинатсемпе апат-ҫимӗҫ комбиначӗсен тата промысла кооперацинпе инвалидсен кооперации артелӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн август уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухнӑ.

Промкомбинатсен ӑмӑртӑвӗнче Тӑвайри промкомбинат (управляющийӗ Игнатьев юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Широв юлташ) мала тухнӑ. Вӑл август уйӑхӗнчи плана продукци туса кӑларас енӗпе 104,1 процент тултарнӑ. Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Тӑвайри райпромкомбината памалла тунӑ тата ӑна ӑмӑртура палӑрнӑ работниксене премилеме 15.000 тенкӗ укҫа панӑ.

Ӑмӑртура мала тухнӑ Шӑхасан районӗнчи промкомбината 10.000 тенкӗ, Ҫӗрпӳ районӗнчи промкомбината 5.000 тенкӗ парса премиленӗ.

Август уйӑхӗнче Канаш хулинчи, Сӗнтӗрвӑрри, Сӗнтӗр районӗсенчи тата Янташри промкомбинатсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Апат-ҫимӗҫ комбиначӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗнче Кувакино районӗнчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗ (директорӗ Жоров юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Ларионов юлташ) мала тухнӑ. Вӑл продукци туса кӑлармалли плана 213,6 процент тултарнӑ. Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Ҫӗмӗрле районӗнчи апат-ҫимӗҫ комбинатӗнчен илсе, Кувакино районӗнчи апат-ҫимӗҫ комбинатне памалла тунӑ тата ӑмӑртура палӑрнӑ работниксене премилеме 6.000 тенкӗ укҫа панӑ.

Август уйӑхӗнче Ҫӗмӗрле районӗнчи, Шупашкар хулинчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Промысла коопераци артелӗсен ӑмӑртӑвӗнче Шупашкарти «Красный мебельщик» артель (председателӗ В. Е. Егоров юлташ, хула совет исполкомӗн председателӗ Аникин юлташ) мала тухнӑ. Вӑл август уйӑхӗнчи плана 190 процент тултарнӑ, ҫапла вара продукци туса кӑларассине, июль уйӑхӗпе танлаштарсан, 33,6 процент ӳстернӗ. Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне, Шупашкарти «Пекарь» артельтен илсе, «Красный мебельщик» артеле памалла тунӑ тата ҫав артеле ӑмӑртура палӑрнӑ работниксене премилеме 6.000 тенкӗ укҫа панӑ.

Ӑмӑртура мала тухнӑ Сӗнтӗрвӑрринчи «Портной», Шупашкарти «Пекарь» артельсене 4.000-шер тенкӗ преми памалла тунӑ.

Август уйӑхӗнче Шупашкарти «Металлист», «Кооператор», Заводской поселокри «23 годовщина Октября», Тӑвай районӗнчи Тӑрмӑшри Ворошилов ячӗпе тӑракан, Сӗнтӗр районӗнчи Янӑмри «Дружба», Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Астакассинчи «Лесоруб», Ҫӗрпӳ районӗнчи Абакассинчи тата Шупашкар районӗнчи Сӗньялти «Араслан» артельсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Инвалидсен коопераци артелӗсен ӑмӑртӑвӗнче август уйӑхӗнчи итогсем тӑрӑх Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗҫлисем пулман.

Ӑмӑртура мала тухнӑ Улатӑрти «Союз инвалидов» артеле пӗрремӗш преми—10.000 тенкӗ памалла тунӑ.

Август уйӑхӗнче Канашри «Красный воин», Октябрьскинчи Чкалов ячӗпе тӑракан тата Чаканарти «Красный восток» артельсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ

Вырӑс халӑхӗн юррисене чи лайӑх юрлакансене Хисеплӗ грамотӑсем тата премисем панӑ

СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Искусство ӗҫӗсен комитечӗ Пӗтӗм Союзри смотрта вырӑс юррисене чи лайӑх юрласа кӑтартнӑ ҫынсене тата хорсен руководителӗсене хисеплӗ грамотӑсемпе наградӑланӑ тата премисем панӑ. Премисене ҫаксене панӑ: Пятницкий ячӗпе тӑракан хорӑн художествӑллӑ руководительне В. Захарова, вырӑс юррисене юрлакан государство хорӗн руководительне А. Свешникова, унтан Лемешев, Максакова, Русланова артистсене тата ыттисене те. Хисеплӗ грамотӑсене 6 хора панӑ: Пятницкий ячӗпе тӑракан вырӑс халӑх хорне, вырӑс юррисене юрлакан государство хорне, Архангельскри ҫурҫӗрти вырӑс юррисен хорне, Воронежри вырӑс халӑх юррисен хорне, Горькири Атӑл таврашӗнчи халӑх юррисен хорне, Калининри вырӑс халӑх юррисен хорне.

Ҫитес кунсенче вырӑс халӑх юррисен ыйтӑвӗсемпе пӗтӗм Российӑри конференци пухӑнать. Унта ҫак докладсене сӳтсе яваҫҫӗ: «Хор коллективӗсемпе солистсен репертуарӗ ҫинчен» тата «вырӑс юррисене мӗнле-мӗнле юрлани ҫинчен». (ТАСС).

Сентябрь 5

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх

Шупашкар, Калинино тата Çĕрпӳ районĕсем тĕштырăсене вырса пĕтернĕ

КӲКЕÇ, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем, сентябрĕн 8-мĕшĕ тĕлне 16.887 гектар çинчи тĕштырăсене вырса пĕтерсе, государство планне тултарнă.

* * *

КАЛИНИНО, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Сентябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем 16.540 гектар çинчи тырпула вырса, государство планне пурнăçларĕç. Çав вăхăтрах 325 гектар çинчи махоркăна касса пуçтарчĕç. Вăрлăхлăх курăксене 206 гектар çинчен вырса пухнă. [illegible] пырать, паянхи кун тĕлне 105 гектар çинчен кантăр татса пухнă.

Ыраш акмалли плана пирĕн районри колхозсем сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлнех 102 процент тултарчĕç. Кĕлте турттарса капана хывассине 60 процент тултарнă. Анчах та авăн çапасси районра çителĕксĕр пыратьха, пирĕн колхозсем пурĕ те 5210 гектар [illegible] кăна çапса пухнă, вăл 30 процент пулать. [illegible]

Район паянхи кунччен государствăна тырă памалли графикпа [illegible] тултарса пымасть. Ĕнер пĕр кун хушшинче 1.100 центнер тырă патăмăр, паян тата ыран 2.000 центнер парсан, графика [illegible] «Первомайский», «Правда», «Путь Ленина», Папакин ячĕпе тăракан колхозсем, пурĕ 6 колхоз, государствăна тырă парас ĕçсене [illegible]

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра [illegible]

С. САПЕРКИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ÇĔРПӲ, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем тĕштырăсене 16.917 гектар вырса пухнă. Çапла вара плана пурнăçланă. Кĕлте турттарса капана хывас тата авăн çапас ĕç районра ăнăçлă пырать.

Ӳкерчĕк çинче: Красноармейски МТС-ри трактористка Е. Николаева юлташ. Тракторсемпе тумалли çулталăкри ĕçсен планне вăл сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне 117 процент тултарнă, 80 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Район кĕлте кӳрес ĕçе вăйлатрĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем, фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăха хутшăнса, ĕç тухăçлăхне нумай ӳстерчĕç. Сентябрĕн 5-мĕшĕччен кашни кун вăтам шутпа 200 гектар çинчи кĕлтене турттарса капана хыватчĕç, халĕ 1000—1500 гектар çинчен турттарса капана хываççĕ. «Ильич», «Жнейка» колхозсем кĕлтене капана хывса пĕтерчĕç. «Жнейка» колхозра 130 гектар çинчи кĕлтене вăкăрсемпе кӳнĕ. «Труженник» колхоз иртнĕ çулсенче кайра пыратчĕ, кăçал вăл мала тухрĕ. Кунта та вăкăрсемпе анлăн усă кураççĕ. Ксенофонтов тата Иванов юлташсем вăкăрсемпе кĕлте кӳреççĕ. Вĕсем икшер çĕмел тиесе 15-шер лав турттараççĕ.

«Унга» колхозра И. Евдокимов колхозник хăйĕн ĕнине кӳлсе ĕçлеме вĕрентнĕ. 3 кун хушшинче вăл 7 гектар çинчи кĕлтене итеме турттарнă.

Степан Разин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем В. Тимофеева, Д. Иванова, В. Филиппов тата ыттисем те кăнтăрла та, çĕрле те кĕлте турттарса капана хываççĕ.

Государствăна тырă парасси те кунта лайăх пырать. Сентябрĕн 11-мĕшĕ тĕлне вĕсем пур тĕрлĕ культурăсене те государствăна парса татма шутлаççĕ. Тельман ячĕпе тăракан колхоз пăрçа, сĕлĕ, вика çапса пĕтерчĕ.

Районри колхозсем 9.326 гектар çинчи кĕлтене капана хывнă, фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхăн малтанхи виçĕ кунĕнче 3000 гектар çинчен кĕлте турттарнă. 5738 гектар çинчи тырра çапса пухнă. 250 гектар çинчи вăрлăхлăх клевера çулса тата вырса пухнă.

«Красный пахарь» колхозра виçĕ кун ĕнтĕ кăнтăрла та, çĕрле те уйăран кĕлте турттараççĕ. Çĕрле 6 лашапа çуртыррине итем çине кӳреççĕ, кăнтăрла вара ăна лашасемпе аштараççĕ. Çак ĕçе тăвакан Яковлев, Кузьмин, Григорьева юлташсем талăкра икĕ норма тултараççĕ. Çак колхоз фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра авăн çапса пĕтерме шутлать.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

Служащисем çĕрле колхоз ĕçне тухаççĕ

КӲКЕÇ, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх пуçлансанах районри нумай колхозсем, уяр çанталăкпа туллин усă курас тесе, кăнтăрла та çĕрле те ĕçлеççĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхозри Г. Иванов, А. Михайлова, Н. Иванова юлташсем çĕркаçиччен 16-шар лав кĕлте кӳреççĕ. Ку колхозăн ĕçне районра ĕçлекен служащисем те хутшăнаççĕ. Госбанкра ĕçлекен Л. Иванова, ВЛКСМ райкомĕнче ĕçлекен А. Лаврентьева, ялсоветĕнче ĕçлекен А. Туманникова юлташсем кăнтăрла — учрежденире, çĕрле колхозра авăн çапнă çĕрте ĕçлеççĕ. Вĕсем кулленхи нормăна ăнăçлăн тултараççĕ.

Çак колхоз государствăна тырă кĕçех парса татать, памалли тепĕр 12 центнер кăна юлнă. Колхозра ĕçе пĕлсе организациленине пула, кĕрхи çĕртме тăвасси те ăнăçлăн пырать.

Районри колхозсем вăрлăхлăх курăксене вырса пухма тытăнчĕç. 670 гектартан 250 гектарне вырса пухнă.

Анчах та «Культура», «11 лет Октября», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăха пачах çителĕксĕр хутшăннă. Кунта кăнтăрла çеç ĕçлеççĕ, вăрлăхлăх курăксене пухма, кĕрхи çĕртме тума тытăнман.

Уяр кунсемпе туллин усă курса, кĕлте турттарса капана хывас тата авăн çапас ĕçсене хăвăртлатмалла. Вăрлăхлăх курăксене пухас ĕçе кая хăвармалла мар.

М. НИКИТИН.

Тырă тăкăнса пĕтет, анчах вырма васкамаççĕ

СЕНТЕР, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра малта пыракан колхозсем çуртыррисене вырса пĕтерчĕç. Халĕ пикенсех авăн çапаççĕ тата государствăна тырă параççĕ. Анчах та уйрăм колхозсем тырă вырас ĕçе чăтма çук тăсаççĕ. «Красное знамя» колхозăн 90 гектар вырса пухмалла. «Ленинский путь» колхоз 42 гектар, Горький ячĕпе тăракан колхоз 75 гектар, «Коминтерн» колхоз 40 гектар, «Гигант» колхоз 79 гектар кăна вырнă. Çав вăхăтрах вĕсен кашниннех 125—140 гектар çурхи тырă вырмалла. Çуртыррисене вырассипе Киров ячĕпе тăракан колхоз уйрăмах юлса пырать. Кунта 230 гектар вырăнне 98 гектар çеç вырнă. Ĕç дисциплини пачах япăхса кайнă. Кам мĕн чухлĕ ĕçленине шута илмеççĕ. Çавна пула колхозниксем 9—10 сехетре кăна ĕçе тухаççĕ, хăшĕсем пачах та тухмаççĕ, кунĕ-кунĕпех мăйăр пухса çӳреççĕ. Колхозра икĕ жнейка пур. Вĕсемпе усă курмаççĕ, çавасемпе те çулмаççĕ. Тырă пулса çитнĕ, тăкăнать, анчах колхоз председателĕ Анисимов юлташ васкамасть. Тырра вăхăтра пухса кĕртес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх çинчен колхозниксене ăнлантарса паман, тырпул пухас ĕçе колхозри пĕтĕм вăя мобилизацилемен.

З. СЕМЕНОВ.

Кĕлтесене алăпа йăтаççĕ

ЙЕПРЕÇ. «Коммунар» колхозра лашасем сахал, çапах та кĕлте турттарса капана хывас ĕçе вăхăтра туса пыраççĕ. Вĕсем кĕлтене лашапа турттарасса кĕтмеççĕ, 50 гектар çинчен ыраш кĕлтисене, 20 гектар çинчен тулă кĕлтисене алăпа çĕклесех капана хывнă. Лашасемпе пурĕ те 29 гектар çинчи кĕлтесене çеç турттарнă.

Çапла вара халь вырнă тырпула йăлтах капана хывса тирпейленĕ. Государствăна тырă парас ĕç график тăрăх пулса пырать.

Е. КАРТАШОВ.

Сентябрь 15

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсем ĕçре малта пыраççĕ

Пирĕн Елчĕк МТС-ĕнчи парторганизаци ВКП(б) членĕсене 12 çынна, ВКП(б) членĕн кандидачĕсене 10 çынна пĕрлештерсе тăрать. Вĕсенчен ытларахăшĕсем производствăра ĕçлеççĕ. Çичĕ коммунист трактор бригадисене ертсе пыраççĕ, пилĕк коммунист вĕсен помощникĕсем пулса ĕçлеççĕ.

Коммунистсем МТС работникĕсем хушшинче тӳрĕ кăмăлпа, вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçленипе палăрса тăраççĕ. Çапла, коммунист П. Марков ертсе пыракан 8-мĕш бригада, çулталăкри плана срокчен нумай малтан 132 процент тултарса, малти вырăна тухрĕ. Çак çитĕнӳ бригадăри ĕçе тĕрĕс йĕркеленипе тунă. Бригадăри кашни рабочие, унăн пултарулăхне курса, ĕçе вырнаçтарнă. Рабочисем пурте пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Коммунистсем Марковпа Гордеева юлташсем, СТЗ тракторпа ĕçлесе, çулталăкри плана 170 процент тултарнă. Вĕсен паха опычĕ ытти трактористсене лайăх ĕçлеме, çапла вара пĕтĕм бригадăна çĕнтерӳ тума май пачĕ.

Коммунист Г. Струнков ертсе пыракан 10-мĕш бригада та тракторпа тумалли ĕçсен çулталăкри планне ирттерсе тултарчĕ, республикăри ăмăртура мала тухрĕ. Халĕ ĕнтĕ унăн бригади фронтовой бригада пулса тăчĕ. Бригадăри комсомолецсем Порфирьев, Уткина юлташсем çулталăкри плана 155 процент ытла тултарнă. Ытти трактористсем те вĕсенчен каях юлмаççĕ. Струнков бригадир, бригадăри ĕçсене тĕрĕс йĕркелесе пынипе пĕрлех, малта пыракансене парти ретне илес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлет.

Коммунист Павлов ертсе пыракан бригада та çулталăкри плана пурнăçа кĕртнĕ.

Вунçиччĕмĕш трактор бригади çултан çулах кая юлса пынă. Кăçал вăл та, ВКП(б) членĕ Спиридонов юлташ ертсе пынипе, малти вырăна тухрĕ. Спиридонов бригадир яланах трактористсемпе пĕрле пулать, вĕсемпе килĕшӳллĕн ĕçлет. Часчасах вăл трактористсем хушшинче калаçусем ирттерет, вĕсене малта пыракансен опычĕпе паллаштарать, социализмлă ăмăртăва организацилет. Трактористка-коммунистка М. Казакова, ăмăртăва хутшăнса, çулталăкри плана 200 процент тултарма сăмах панă. Вăл 140 процент тултарнă ĕнтĕ. Унтан пример илсе ĕçлесе, Юсупова юлташ та паха тĕслĕхсем кăтартать.

Парторганизаци малта пыракан трактористсене парти ретне илме, ВКП(б) членĕн кандидачĕсене члена илме хатĕрлет. Волковпа Порфирьев юлташсем парти кандидатне кĕме, Марковпа Гордеева юлташсем ВКП(б) членне кĕме хатĕрленсе çитнĕ ĕнтĕ.

Коммунистсен паха ĕçĕсем пĕтĕм МТС коллективне СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление пурнăçа кĕртессишĕн активлăн кĕрешме мобилизацилеççĕ.

И. ИГОЛКИН,
МТС-ри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ.

Ĕçе вăхăтра туни—фронта пулăшни

Елчĕк районĕнчи Тăрмăш ялсоветне кĕрекен «Новый путь» колхоз ĕçе хăвăрт тата лайăх пахалăхпа туса пырать. Кунта ыраш акас ĕçе районра чи малтан, августăн 20-мĕшĕ тĕлне вĕçлерĕç. Халĕ ыраш калчи сип-симĕс те пĕр тикĕс ешĕрсе выртать, ун çинче пĕр çумкуракĕ те çук. Паллах, ку ĕнтĕ ĕçĕн пахалăхĕ çинчен калать. Колхоз председателĕ Андрианов юлташ ыраш акас ĕçе вăхăтра тунипе тивĕçлипе мухтанса çапла калать:

— Ыраш пирĕн тырпул шутĕнче пысăк вырăн йышăнать. Ăна иртерех аксан, вăл юр айне вăйлă тымарланса кĕрет, çавăнпа та сивĕрен те, йĕперен те хăрамасть. Çапла вара, килес çулхи тырпул тухăçĕшĕн кăçалах кĕрешмелле.

«Новый путь» колхоз план тăрăх 160 гектар ыраш акмаллаччĕ. Кунта пусуçаврăнăшне пăсмасăрах 170 гектар акнă.

Колхоз ыраш акса пĕтерсенех кĕрхи çĕртме тума тытăнчĕ. Кĕрхи çĕртмене вăхăтра туни тырă тухăçлăхне ӳстерессишĕн кĕрешни кăна пулмасть, вăл çуркуннехи ĕçсене те нумай çăмăллатать. Çакна кунта лайăх ăнланаççĕ. Кĕрхи çĕртмене кунта 20 процента яхăн пурнăçланă та ĕнтĕ.

— Ĕçе вăхăтра тăватăн, пысăк тухăçлă тырă пухатăн. Пысăк тухăçлă тырăшăн кĕрешни — Хĕрлĕ Çара пулăшни пулать, — тет ялсовет председателĕ П. Щербаков. Вăл тĕрĕс калать.

А. САМАРКИНА.

Утта салатса пĕтереççĕ

ИШЛЕЙ. Чантăр ялсоветĕнчи «Волгарь» колхозăн паян куна çитсе те Атăл леш енче 15 гектар çулман çаран пур. Колхоз правленийĕ ун çинчен мансах кайнă.

— Кăçал выльăх апачĕ нумай, çулмасăр хăварма та, улăхран сутма та çителĕклĕ, — теççĕ колхозра хăшпĕрисем.

Нумаях пулмасть 6 купа утта 4200 тенке сутса янă. Колхоза ертсе пыракансем иртнĕ çул выльăх апачĕ пулман пирки сиен курнине маннă пулас. Выльăх апатне каллех салатма тытăнчĕç. Район руководителĕсем çакна кураççĕ, анчах шарламасăр тăраççĕ.

С. ЗАХАРОВ.

Çĕнĕ вите

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Пăвари «Сатурн» колхоз 20 лаша вырнаçмалăх çĕнĕ вите туса пĕтерчĕ. Çак кунсенче тата 20 лаша вырнаçмалăх тепĕр вите туса пĕтереççĕ.

П. ДОКТОРОВ.

Комсомолецсем выльăх-чĕрлĕхе юратса пăхаççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Комсомолăн районри чылай пуçламĕш организацийĕсем общественнăй выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕпе тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе начар мар ĕçлеççĕ. Вĕсем çак ĕçе комсомолецсене ытларах явăçтарса çирĕплетсе пыраççĕ.

Сăмахран, «Трактор» колхозри организацие илер. Унта пурĕ 27 комсомолец, вĕсенчен 8-шĕ фермăсенче ĕçлеççĕ. Фермăсен заведующийĕ Николаева юлташ хăй те комсомолра тăрать. Чыслă ята вĕсем ĕçпе тӳрре кăлараççĕ. Ферма çурчĕсем кунта таса та тирпейлĕ. Чăн-чăн хуçа пек юратса пăхаççĕ комсомолецсем колхоз выльăхĕсене. Çавăнпа та колхоз государствăна сĕт-çу, аш-какай парăмĕсене срокченех парса татнă. Контрактаци планне пур выльăхсем енĕпе те тултарнă. Выльăхсене хĕл каçарма çителĕклĕ таран апат хатĕрленĕ. Комсомолецсен вăйĕпе кăна 130 тонна силос хывнă.

«Красный Октябрь» колхозра фермăсен заведующийĕ пулса комсомолка Васильева юлташ ĕçлет. Вăл ертсе пыракан ферма икĕ çул хушши ĕнтĕ районри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава хăй аллинче тытса тăрать.

Т. ТАБАКОВА.

Хĕрлĕ Ялав лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать

ÇĔРПӲ. (Телефонпа). Çак кунсенче кунта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пыракан ăмăртура мала тухнăшăн района Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç.

Хĕрлĕ ялав пана кун колхозсенчи паллă çынсем — стахановецсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансем, ферма заведующийĕсем, колхоз председателĕсем чаплă пухăва пуçтаранчĕç.

Пухăва ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Д. Митьков юлташ, район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен кĕске сăмах каласа, уçрĕ. Районри колхозсем 1944 çулхи 4 уйăх хушшинче плана майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 18 процент, сурăхсем енĕпе 31 процент, сыснасем енĕпе 5,5 процент ирттерсе тултарнă.

Куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава райсовет исполкомĕн председателĕ Хабаров юлташ хăй аллине илсе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе малалла та ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме, çак хисеплĕ ялава алăрах хăварассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме тупа тăвать.

Пухура малта пыракан «Пионер» колхозри ферма заведующийĕ Данилова юлташ тухса калаçрĕ. Ун хыççăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕшĕн Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ «Ĕмĕт» колхоз председателĕ Скворцов юлташ хĕрӳллĕ сăмах тухса калать.

— Эпир, — тет Скворцов юлташ, — выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ĕнесем енĕпе 122 процент, сыснасем енĕпе 115 процент, сурăхсем енĕпе 102 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 135 процент тултартăмăр. Ку тĕлĕшпе малалла та пикенсе ĕçлĕпĕр. Çĕршывпа фронта ытларах та ытларах аш-какай, сĕт-çу парса тăрассишĕн тăрăшăпăр.

Пухура пулнисем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çитес вăхăтрах пурнăçламалли конкретлă обязательствăсем йышăнчĕç. Майракаллă шултăра выльăхсен шутне çулталăкри планран ирттерсе 10 процент, сыснасен шутне 8 процент, сурăхсен шутне 15 процент ӳстермелле. Выльăх-чĕрлĕх çурт-йĕрĕсене сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех юсаса пĕтермелле. Выльăх апатне октябрĕн 10-мĕшĕччен ферма заведующийĕсен аллине виçсе, акт çырса памалла. Пуху пысăк çĕкленӳпе иртрĕ.

П. ПАВЛОВ.

„СВОБОДА" КОЛХОЗА ХĔРЛĔ ЯЛАВ ПАНИ

МУРКАШ, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Ĕнер Кашмашри «Свобода» колхоза вăйлă тырпулшăн пыракан социализмлă ăмăртура мала тухнăшăн Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç.

Чаплă пухăва «Свобода» колхоз членĕсемпе çывăхри колхозсен председателĕсем пухăннă.

Колхозсем хушшинче вăйлă тырпулшăн пыракан социализмлă ăмăртура мала тухнă «Свобода» колхозăн членĕсене ВКП(б) Чăваш Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ М. Лисин юлташ Обкомпа Совнарком ячĕпе саламларĕ.

— Эсир социализмлă ăмăртура пархатарлă ĕçлеме пултарнине кăтартрăр, — терĕ Лисин юлташ. — Кăçалхи çуракине районра пуринчен малтан тата лайăх туса ирттертĕр. Çавăншăн паян сирĕн алла Совнаркомăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне паратпăр. Çак ялав сире малашне татах та лайăхрах ĕçлеме чĕнет.

Лисин юлташ ялава «Свобода» колхоз председательне И. Петровский юлташа парать. Колхоз председателĕ ăна хăй аллине илнĕ май чĕркуçланса чаплă ялавăн пĕр хĕррине чуптăвать, унтан сăмах калать:

— Вăйлă тырпулшăн пыракан ăмăрту çак ялава илнипех вĕçленменнине эпир пурте лайăх ăнланатпăр, — тет вăл. — Пирĕн тырпула ăнăçлăн пухса кĕртмелле, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем вăхăтра парса татмалла, ялава хамăр алăрах хăварассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле — çакă пулать пирĕн задача.

Колхоз председателĕ Петровский юлташ, çав задачăна пурнăçа кĕртме пулса, пĕтĕм колхозниксен ячĕпе тупа тăвать.

Малалла Свердлов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Т. Налимов юлташ сăмах илет.

— Çакăн пек чаплă ялав илнĕ ятпа кашмашсене саламлатпăр, — тет вăл. — Анчах сире çакна та калас пулать: куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава Кашмаш колхозĕшĕн кăна мар тунă, ку ялавшăн эпир те кĕрешетпĕр. Пирĕн ăна хамăр алла илес ĕмĕт пысăк, эпир начарах мар ĕçлетпĕр. — Кунта Налимов юлташ хăй колхозĕн ĕçĕсем çинчен каласа парать.

Кун хыççăн пухура малта пыракан «Броневик» колхозăн председателĕ Матвеев, «Свобода» колхозри чи пултарулăх бригадир М. Краснова, çак колхозăн сысна ферминче ĕçлекен ватă колхозник А. С. Семенов юлташсем тухса калаçрĕç.

Муркаш райисполкомĕн председателĕ Г. Федоров юлташ хăйĕн сăмахĕнче «Свобода» колхозăн ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртрĕ, вĕсене халех тӳрлетмесен, Хĕрлĕ Ялав алăран вĕçерĕнесси пирки асăрхаттарчĕ.

Колхоза Совнаркомăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пани çине ответлесе, пухăва пынă колхозниксем ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлес тĕлĕшпе хăйсем çине таткăлă обязательствăсем илчĕç. Вĕсем кӳршĕри «Восток» колхоза социализмлă пулăшу пама пулчĕç. Паян вара «Свобода» колхозран çав колхоза тырă вырса пулăшма 1 жнейка, 16 колхозница тухса кайрĕç.

Т. ИВАНОВ.

Пĕр кунта 6.505 кĕлте çыхнă

Каменец-Подольск облаçĕнчи Городок районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозăн колхозници Евдокия Собко кĕлте çыхас ĕçре калама çук пысăк çитĕнӳ тунă. Вăл ирхине 4 сехетре ĕçе тухнă та каçхине 11 сехетчен 8,5 гектар çинчи кĕлтесене çыхса пĕтернĕ, вăл 5.630 кĕлте çыхнă. Çав кун стахановка Собко 49 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă.

Ытти колхозницăсем те вара Собко пек ĕçлеме пуçланă. Вĕсем те çав тери тухăçлăн ĕçленĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем Собкоран та ирттерсе янă. Мария Дрозд пĕр кун хушшинче 6.505 кĕлте çыхнă. Кӳршĕри «Октябрь» колхозри Евдокия Халактора 6.200 кĕлте çыхнă. (ТАСС).

Франципе Бельгири тата Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ЭКСПЕДИЦИЛЛĔ ВĂЙĔСЕН ВЕРХОВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен Лувэн хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнелле куçса пыракан çарĕсем Бобрингон çывăхĕнче Альберт каналĕ урлă каçса кайнă. Сентябрĕн 7-мĕшĕнче каçхине малта пыракан чаçсем Бурлеопольд районне çитнĕ. Союзниксен çарĕсем Ипр хулине йышăннă та Руле хули патне çывăхарса çитнĕ. Союзниксен çарĕсем Булоньпе Кале хулисене çавăрса илсе пынă.

Союзниксен Бельгин кăнтăр районĕсенче кĕрешекен çарĕсем Брюссель хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Вавр хулине тытса илнĕ. Маас шывĕ тăрăх Намюр хули патĕнчен малалла куçса пыракан ытти чаçсем Юи хулине ирĕке кăларнă. Çав чаçсен малта пыракан отрядĕсем Льеж хули патне хĕвеланăç енчен пырса çитнĕ. Союзниксен чаçĕсем Понт-а-Муссонран çурçĕртерехре Мозель шывĕ урлă каçса кайнă, тăшман вĕсене питĕ хытă хирĕç тăнă.

Сентябрĕн 8-мĕшĕнче, çанталăк начар тăнă пирки, авиаци вăйлăн кĕрешеймен.

СОЮЗНИКСЕН ВĂТАÇĔР ТИНĔС ТАВРАШĔНЧИ ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире çанталăк çав тери начар тăнă пирки союзниксен çарĕсем малалла вăйлă тапăнса пырайман. Адриатика секторĕнче питĕ хаяр çапăçусем пыраççĕ. Унта 8-мĕш армин чаçĕсем тăшманăн нумай контратакисене сирсе янă, тăшмана пысăк çухату ӳстернĕ.

Флоренци хулинчен çурçĕртерехре патрульсем кĕрешеççĕ. Флоренцирен хĕвеланăçнерехре американецсен 5-мĕш армири патрулĕсем Лукка хулипе Прато хули хушшинчи çултан çурçĕртерехре сăртлă вырăна тата шаларах кĕрсе кайнă.

Америкăн 7-мĕш армири чаçĕсем, Хĕвелтухăç Франци тăрăх хăвăрт куçса пырса, Безансон хулине çитнĕ, тăшман вĕсене питĕ хытă хирĕç тăнă, вăл хăйĕн каялла чакмалли çулĕсене хӳтĕлеме хăтланнă. Француз çарĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕнтернĕ те Швейцари чикки çывăхĕнче Понтарлье хулине тытса илнĕ.

Начар çанталăк союзниксен авиацине вăйлă кĕрешме май паман.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИРИ ЗАВОДСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, «Либерейтор» тата «Вĕçекен крепость» йышши 1.000 самолет ытла, «Мустанг» йышши самолетсем хӳтĕлесе пынипе, паян Людвигсхафенри хими предприятийĕсемпе синтетически нефть завочĕсене атакăланă. Кунсăр пуçне, Америка самолечĕсем Майнц çывăхĕнчи Кистель хулинчи артиллери склачĕ çине тата Франкфуртран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларакан Густавсбургри танк завочĕ çине бомбăсем пăрахнă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: Сербире Югослави чаçĕсем Пожега хулине тытса илнĕ хыççăн ăнăçлăн малалла наступлени туса пыраççĕ. Пожега хулинчен кăнтăртарахра Арилье хулине йышăннă. Ужице тата Вардиште секторĕнче нимĕç çарĕсемпе, четниксемпе тата недичевецсемпе хаяррăн çапăçаççĕ. Тăшман Пожега хулине каялла тытса илме хăтланнисем пăчланса ларнă.

Боснире, Сараевăпа Мостар хулисем хушшинчи çул çинче, тăшманăн моторизациленĕ колоннине аркатса тăкнă. Спреча шывĕн улăхĕнче нимĕçсемпе четниксен отрячĕсемпе çапăçаççĕ.

Хорватире Югослави çарĕн чаçĕсем пуринчен ытла Загреб хулипе Белград хули хушшинчи чугун çул районĕнче, Яруга — Динковцы участокĕнче кĕрешнĕ. Çав районра чугун çула 308 тĕлте пăсса хунă. Çавăн пекех тата нумай кĕпере тата çав линие хӳтĕлеме тунă нумай дота сирпĕнтерсе янă е çĕмĕрнĕ. Тăшман салтакĕсене нумай вĕлерсе пĕтернĕ. Кним хулипе Бихач хули хушшинчи çул çинче Югослави чаçĕсем нимĕçсен колоннине аркатса тăкнă.

Словенире ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем Штайерская территорийĕнче çаплах наступлени туса пыраççĕ.

ГРЕЦИРИ ПАРТИЗАНСЕМ КĔРЕШНИ

СТАМБУЛ, сентябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, Грецири партизансем Турци чиккипе юнашар выртакан районсене нимĕçсенчен тасатнă. Орестиада провинцийĕн нимĕçсем лартнă «губернаторĕ» нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен пĕр ушкăнĕпе пĕрле Турци çĕрĕ çине тарнă. Свиленградран Стамбул хулине пынă пĕр çын çапла каласа панă: партизансем тĕрĕслесе тăракан чугун çул çинче йĕрке питĕ лайăх. Винтовкăсемпе тата гранатăсемпе хĕçпăшалланнă партизансен ушкăнĕсем чугун çул станцийĕсене хӳтĕлесе тăраççĕ, çавна пула поездсем пĕр хăрамасăр çӳреме пултараççĕ. Партизансен отрячĕсем çумне кулленех вырăнти грексем хăйсен ирĕкĕпе пыра-пыра хутшăнаççĕ.

ЯПОНИ ПАРЛАМЕНЧĔН 85-мĕш ЧРЕЗВЫЧАЙНĂЙ СЕССИЙĔНЧЕ КОЙСО ТУХСА КАЛАНИ

ТОКИО, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Япони премьер-министрĕ Койсо парламентăн 85-мĕш чрезвычайнăй сессийĕнче сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: Япони лару-тăрăвĕ халь питех те йывăр. «Вăрçăн хальхи тапхăрĕнче, — тенĕ вăл,—тăшман пирĕн çĕршыва хальхинчен час-часрах тата хытăрах атакăлама пултарнă вăхăтра, пирĕн хамăр çĕршыва тăшман десант антарма пултарассине шута илмелле». «Лару-тăру халь чăнах та питĕ çивĕчленсе кайнине тата ытту империн кунçулĕ çинчен пынине» палăртса, Койсо çапла каланă: çак йывăрлăха çĕнтермешкĕн государствăн мĕнпур [illegible]

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Вăрçă вăхăтĕнчи йĕркелĕх

Ильин юлташ иккĕмĕш çул ĕнтĕ «Победа» колхозăн председателĕ пулса ĕçлет. Унăн пурнăç опычĕ пысăк пулин те, колхоза ертсе пырас ĕç уншăн çĕнĕ пулнă. Çапах та вăл тăрăшнипе ялхуçалăх çулне колхозниксем пĕлтĕр лайăх вĕçленĕ. Хăйсен колхозĕнчи ĕçсене туса пĕтернĕ хыççăн «Малалла» колхоза тырă вырса, «Коминтерн» колхоза 200 лав ытла кĕлте кӳрсе, капана хывса парса пулăшнă.

Кăçал колхоз çуркуннехи ĕçсене иртнĕ çулхинчен чылай кал-каллăнрах туса ирттерне, тырă та ăнăçлăрах çитĕннĕ.

Колхозра ĕçлеме пултаракан вăйпитти хĕрарăмсем 52 çын. Вăрçăран аманса таврăннă 3—4 инвалидпа ватă çынсемсĕр пуçне, ялта арçынсем питĕ сахал. Çав вăхăтрах вырса пухмалли тырпул кашни ĕçлеме пултаракан çын пуçне вăтамран 6 гектара яхăн тивет.

Анчах председатель ĕçлекенсем сахал тесе пăшăрханса лармасть. Вăл колхозри пур пек вăя пĕтĕмпех ĕçе явăçтарма тăрăшать. Колхозниксене тĕрĕс вырнаçтарса тухнине, ĕçе лайăх организациленине пула, кунта пур ĕçсем те вăхăтра ĕлкĕрсе пыраççĕ. Колхоз паянхи кун тĕлне тырпулсене вырса пĕтернĕ. Ыраш акмалли пусса кăçал, тырă вырма тухиччен, 2425 лав тислĕк тăкнă. Августăн 10-мĕшĕнче ыраш акма тытăннă, 23-мĕшĕнче акса пĕтернĕ. Акасса пĕтĕмпех иккĕмĕш хут сухаласа акнă. Халĕ пурĕ те 1,5 гектар çинчи вăрлăхлăх клевера вырса пухмалли, кантăр татмалли тата çĕрулми кăлармалли кăна юлнă. Государство умĕнчи тырпул парăмĕсене пурне те парса татнă.

Çак ĕçсене Ильин юлташ пĕтĕмпех кол- [illegible]

[illegible] се çитерсен, хăй те колхозниксемпе пĕрлех тăрса ĕçлет. Председателе кура, бригадирĕ, учителĕ, кладовщикĕ, конюхĕ, счетовочĕ, çамрăкки, ватти, — пурте уйхир ĕçĕнче. Çакă ĕнтĕ вăл—вăрçă вăхăтĕнчи ĕç меслечĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн «Тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленийĕпе кунта кашни колхозникпе колхозницăна тĕплĕн паллаштарнă. Колхозри мĕнпур ĕçсене çак постановленире кăтартнă пек туса пыраççĕ. Уйрăм сдельщинăпа анлăн усă курнă май ăмăрту та саралсах пырать, ĕç пахалăхĕ те лайăх.

Ĕçе кун пек организацилесси, паллах, çăмăл мар. Кашни çын хăй вырăнĕнче кирлĕ. А. Сергеев — счетовод, А. Егорова — завхоз, кладовщик, Г. Кириллов — бригадир, Филиппова — ферма заведующийĕ, С. Тимофеев — ватă çын, тепри — конюх е хуралçă т. ыт. те. Председатель, вăрçăччĕнхи виçепе ĕçленĕ пулсан, пĕр 10—15 çынна уйхир ĕçĕнчен хăтарнă пулĕччĕ. Унăн вара тырă вырнă чухне ыраш çапассине те, государствăна тырă парассине те каярах хăвармалла пулатчĕ.

— Ĕç вăйĕ çителĕксĕр, çын çук. Кунтан çирĕпрех сăлтав мĕн пултăр-ха вара? — тесе ларнă пулĕччĕ председатель. Анчах Ильин юлташ апла калакан çын мар.

Председатель колхозăн штатри работникĕсене уйхир ĕçне мобилизациленĕ, пĕр çын та аяккалла пăрăнса юлман. Пысăк сăлтавсăр ĕçе тухманни те пĕрре те пулман.

[illegible]

шинист пулса ĕçлеме тытăннă. Çав вăхăтрах вăл колхоз амбарне тырă йышăнма та ĕлкĕрнĕ. Колхоз счетовочĕ А. Сергеев юлташ, Отечественнăй вăрçă инваличĕ, тырă вырнă чухне те, çапнă чухне те колхозниксемпе пĕрле ĕçленĕ, агитаципе ăнлантарулла ĕçе туса пынă, колхозник мĕçешер ĕçкунĕ тунине ăнлантарса панă. Çав вăхăтрах нарядсемпе распоряженисем çырма та ĕлкĕрнĕ.

Вăрçăччен Сергей Тимофеевич Тимофеев, 63 çулхискер, колхозăн уйхир ĕçĕсене хутшăнман. Кăçал вара ăна капан тума явăçтарнă.

— Капана пĕлсе, çумăр каймалла мар тумалла, Сергей пиччене хушас, — тенĕ колхозниксем. Тимофеев юлташ нормăна кулленех 1,5—2 хут ирттерсе тултарнă.

А. Савельева — ача амăшĕ. Вăрçăччен вăл та колхоз ĕçне ытла хутшăнсах кайман, кăçал вара вăл чи лайăх стахановкăсен ретне тăчĕ. Вăл — лайăх агитатор, комсомол организацин секретарĕ. Кĕлте кӳнĕ чухне вăл 10 лав турттарас вырăнне кашни кунах 20—24-шар лав турттарнă. Нормăна икĕ хут ытла ирттерсе тултарнипе пĕрлех, вăл стена хаçачĕ кăларма та ĕлкĕрнĕ. Унпа колхозри паллă стахановкăсем П. Александрова, С. Васильева, П. Филиппова юлташсем ăмăртса ĕçленĕ.

Жнейкăпа тырă вырас ĕçре тăрăшни кăна мар, мастерлăхпа пĕлӳлĕх те, опыт та кирлĕ. Çак ĕçе кама хушасси çинчен правленире нумайччен шутланă. Вара Игнатьев комсомолеца хушнă. Игнатьев çамрăк, 16 çулта кăна, анчах тăрăшма, тавçăрса илме пултараканскер. Ăна машинăпа ĕçлеме вĕрентнĕ. Игнатьев колхозниксем умĕнче хăй ятне яман, вăл кăнтăрла та, çĕрле те уйра ĕçленĕ. Кириллов бригадир калашле, вăл хăй машинин сассипе нумайĕшне тутлă ыйăхран вăратнă. Норма тăрăх кунне 4 гектар вырас вырăнне вăл 6—8 гектар вырнă.

[illegible]

В. ЯСТРЕБОВ.

акассине, яланах арçын ĕçĕ тесе шутланă. Анчах арçынсем вăрçăра. Ильин юлташ вара сеялкăпа ĕçлеме хастар хĕрарăма — Ульяна Николаева юлташа тупнă. Унăн пĕр ача, упăшки вăрçăран суранланса килнĕ, тĕрĕссипе вĕсене иккĕшне те пăхмалла. Вĕсене кун каçиччен мĕн кирлине Николаева пĕтĕмпех çĕрле е çумăрлă вăхăтра хатĕрленĕ. Ыраш акнă чух вăл çынсенчен юлман, нормăна ытлашшипех тултарса пынă. Вăл мĕнле ĕçленине ĕçкунĕсен хисепĕ те лайăх кăтартса парать. Августăн 26-мĕшĕ тĕлне вăл çав уйăхра 68 ĕçкунĕ тунă.

Çапла вара колхозра ĕçлекенсен шучĕ 52 çынран 77 çынна çитнĕ. Вĕсем пур ĕçе те вăхăтра ĕлкĕрсе пынă.

Колхозăн кăçал çĕрулми нумай пулать, анчах лайăх хранилище çук. Вара ватă колхозниксем хăйсен вăйĕпе хранилище туса лартнă. Хранилище уратисене, папкисене тата маччине те юман каскасем çурса тунă.

Çапла «Победа» колхоз членĕсем тырпулсене вăхăтра та пĕр тăкаксăр пухса кĕртнĕ. Государствăна тырă парса татнă. Халĕ авăн çапаççĕ. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç хĕрӳллĕ пырать. Кусене пурне те фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра туса çитереççĕ.

Янчеллă ялсоветне 7 колхоз кĕрет, вĕсенчен нумайĕшĕсем малта пыракан Чурачăк районĕнче лайăх енĕпе палăрса тăраççĕ. Анчах «Победа» колхоз, вĕсенчен пуринчен те мала тухса, ялсовечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

— Çывăрмасăр, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе илнĕ Хĕрлĕ ялава алăран вĕçертес мар тесе, татах та ытларах вăй хурса кĕрешĕпĕр, — тет колхозри чи маттур стахановкăсенчен пĕри А. Михайлова юлташ.

«Победа» колхоз членĕсем çĕрулмипе кантăра та ăнăçлăн пухса кĕртĕç. Колхоз халĕ хĕле хатĕрленет, витесене питĕрсе ăшăтать, апат-çимĕçсем çителĕклĕ пулаççĕ.

Тар юхтарни сая каймĕ. Кăçал колхоз- [illegible]

Чурачăк районĕнчи «Победа» колхоз.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительсен секретарĕн — 4—25, парти пурнăç пайĕн 3—09, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00679. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 16.000 экз.